# «Мерчен» Орлов-Шуҫӑмпа Эктел тусӗсене пухрӗ

Чӑваш патшалӑх наци библиотекинче «Мерчен» музыка тӗпелӗ ӗҫлеме пуҫланӑранпа икӗ ҫул ҫитрӗ. Ӑна йӗркелес тӗлӗшпе виҫӗм ҫул республикӑри чи пысӑк вулавӑшӑн тӗп библиотекарӗ – музыкӑпа нота пайӗн ертӳҫи В.С.Архипова пысӑк ӗҫ туса ирттернӗ. Пӗлтӗртенпе «Мерчен» музыка тӗпелне Раҫҫей Федерацийӗн композиторсен союзӗн членӗ, ЧР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ С.И.Макарова ертсе пырать.

Вера Севастьяновнӑпа Светлана Ильинична нарӑс вӗҫӗнче йӗркеленӗ музыка тӗпелӗн уявне ҫывхарса килекен РСФСР тава тивӗҫлӗ артисчӗн, Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗн тата халӑх артисчӗн А.Г.Орлов-Шуҫӑмӑн 100 ҫулхи юбилейне, ҫавӑн пекех Ҫӑварнине халалланӑ. Ҫав кунхине тепӗр пулӑм та сиксе тухрӗ – Раҫҫей Федерацийӗн писательсен союзӗн тата Чӑваш художникӗсен союзӗн членӗн, ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗн В.П.Сидоров-Эктелӗн (1950-2005) ҫуралнӑ кунӗччӗ. Аристарх Гавриловичпа Василий Петрович 1980 ҫулсенче паллашнӑ та ӗмӗрлӗхех туслашнӑ. Эктел сӑввисемпе Орлов-Шуҫӑм вун-вун юрӑпа романс хайланӑ. Ҫавна май нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук: Чӑваш наци библиотекин чи хӑтлӑ та илемлӗ залӗнче пулса иртнӗ «Мерчен» музыка тӗпелӗнче пуринчен ытларах икӗ классикӑн юлташӗсемпе ентешӗсем – Ҫӗрпӳ тата Елчӗк тӑрӑхӗсенчен тухнӑ культурӑпа искусствӑна юратакансемпе вӗсен ҫывӑх тӑванӗсемччӗ.

Музыка тӗпелӗн уявне яланхи пекех илемлӗ те ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа Светлана Макарова ертсе пычӗ. Вӑл малтанах тӗпел хӑнисене культура ҫулталӑкӗнчи Чӑваш Енри чи курӑмлӑ пулӑмсенчен пӗри Аристарх Орлов-Шуҫӑмӑн 100 ҫулхи юбилейӗ шутланнине, ӑна республика шайӗпе ака уйӑхӗнче уйрӑмах анлӑ паллӑ тума палӑртнине пӗлтерчӗ.

– 1930 ҫулсен пуҫламӑшӗнче Ҫӗрпӳ районӗнчи Уйкас ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, Шупашкарти музыкӑпа театр техникумӗнче вӗренекен яштака та сатур каччӑ темиҫе музыка инструменчӗпе выляма хӑнӑхнӑ, хорта юрласа тата хулари вӗрсе каламалли оркестрта та палӑрнӑ. Вун ҫичӗ ҫулхи студент хайланӑ «Авӑнмасӑр, вӑй хумасӑр» ҫӗкленӳллӗ юрра пысӑк уяври пӗр концертра питӗ тимлӗ итленӗ чӑвашсен паллӑ сӑвӑҫи Уйӑп Мишши чӑтаймасӑр пурте илтмелле: «Ҫакӑ пирӗншӗн чӑн-чӑн хӳхӗм шуҫӑм!» тесе кӑшкӑрса янӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Аристарха, пурте пӗрле калаҫса таталнӑ тейӗн, Орлов-Шуҫӑм тесе чӗнме пуҫланӑ. Иртнӗ ӗмӗр варринчен пуҫласа чӑвашсен чи пултаруллӑ та хӑйне евӗрлӗ хор дирижерне «Маэстро» хушма ят ҫыпҫӑннӑ, – терӗ Светлана Ильинична чӑваш музыка искусствин аталанӑвӗн историйӗнче тарӑн йӗр хӑварнӑ Аристарх Гаврилович пурнӑҫӗпе ӗҫ-хӗлӗ ҫинчен каласа панӑ май.

Чӑваш Енри талантлӑ ҫамрӑк композитор тата юрӑпа ташӑ ансамблӗн пирвайхи илемлӗх ертӳҫи тата хор дирижерӗ ҫинчен Мускавра тата Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи облаҫсемпе республикӑсенче Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫи пуҫланиччен пӗлнӗ. 1940 ҫултан А.Г.Орлов-Шуҫӑма СССР композиторсен союзне йышӑннӑ. Вӑрҫӑ вӗҫленсен вӑтӑр ҫулхи Аристарх Гаврилович ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫланӑ Шупашкарти музыка училищин директорӗнче вӑй хунӑ. Иртнӗ ӗмӗр варринче вӑл халӑх юратакан вун-вун юрӑҫӑр пуҫне «Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан» музыка комедине Чӑваш патшалӑх академи театрӗн сцени ҫинче кӑтартма мехел ҫитернӗ, «Ҫӑлтӑр витӗр ҫул» опера тата ытти пысӑк произведени хайланӑ.

Малалли 8 стр-ра.

# «Мерчен» Орлов-Шусӑмпа Эктел тусӗсене пухрӗ



Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 7 стр-ра.

1967 ҫулта Орлов-Шусӑм тӑрӑшнипе Чӑваш АССР патшалӑх радиопа телевидени комитечӗн хорне йӗркеленӗ. 1992 ҫултанпа ҫӗр-шывӗпе чапа тухнӑ ҫак коллектив – академи хор капелли, ҫӗнӗ ӗмӗр пуҫланнӑранпа вара – ЧР патшалӑх академи симфони капелли. 20 ҫул ытла ӑна Аристарх Гавриловичӑн пархатарлӑ вӗренекенӗ, К.В.Иванов ячӗллӗ ЧР патшалӑх премийӗн лауреачӗ, Раҫҫей Федерацийӗн халӑх артисчӗ Морис Яклашкин ертсе пырать.

Иртнӗ эрнере наци библиотекинче «Мерчен» музыка тӗпелӗн хӑни пулнӑ май, 1969 ҫула аса илтӗм. Шӑп 45 ҫул каялла мана, Совет Ҫарӗн хӗсметӗнчен таврӑннӑ ҫамрӑк педагога, ВЛКСМ Елчӗк райкомне ӗҫлеме чӗнсе илчӗҫ. Вӑл вӑхӑтра республикипе паллӑ Патреккелӗнчи халӑх хорӗн хормейстерӗнче Чӑваш АССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫин ветеранӗ М.В.Ястребова вӑй хуратчӗ. 1969 ҫулхи ҫуркунне вырӑнти депутатсем Мария Васильевнӑна Елчӗк ял канашӗн ӗҫтӑвкомӗн председателӗ пулма суйларӗҫ. Апла пулин те таврари чи паллӑ та сумлӑ, тӗлӗнмелле ӗҫчен, пӑрчӑкан пек лара-тӑра пӗлмен хӗрарӑм-кайкӑр (унӑн хушамачӗ те Ястребова-ҫке) хӑй ачаран туслашнӑ тӑван хорпа ӗҫлеме пӑрахмарӗ. Ҫав туслӑ та ҫирӗп коллектива эпӗ те, пушӑ вӑхӑт питӗ сахалччӗ пулин те, май пур таран ҫулталӑк ытларах ҫӳренӗ.

Ҫав ҫулхинех Елчӗк районӗнчи ял хуҫалӑх предприятийӗсем ҫурхи акана Ҫӗнтерӳ кунӗ умӗн пӗтӗмпех вӗҫлерӗҫ. Пысӑк та савӑнӑҫлӑ уяв иртсе кайнӑ хыҫҫӑн тепӗр куннех КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ З.П. Пчелов йӑлана кӗнӗ хӑйӗн ӗҫлӗ ларӑвне ирттерчӗ. Унта Зинон Павлович Ҫӗнтерӳ кунне районта йӗркеллӗ ирттернӗшӗн нумайӑшне тав тунипе пӗрлех ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Елчӗкри стадионта ӗҫпе юрӑ тата спорт уявӗ – Акатуй ирттермеллине палӑртрӗ. Район пуҫлӑхӗ хӑй сӑмахне вӗҫлесенех парадлӑ костюмне хывма ӗлкӗреймен М.В.Ястребова ура ҫине тӑчӗ.

– Хальхи вӑхӑтра пирӗн районти 6-7 ялта хор коллективӗсем пур. Вӗсен ертӳҫисенчен ытларахӑшӗ Акатуйсемпе тӗрлӗ смотр-конкурссене хӑйсем тӗллӗн, никам пулӑшмасӑр хатӗрленеҫҫӗ. Кӑҫалхи Акатуйӑн пысӑк концертне эпӗ 150-200 ҫынран тӑракан пӗрлештернӗ хорӑн мӑнаҫлӑ юррисемпе пуҫлама сӗнесшӗн. Ҫавна май концерта тӗплӗн хатӗрленес тӗллевпе темиҫе кун маларах Шупашкартан Чӑваш АССР халӑх артистне, ҫӗр-шывӗпех паллӑ дирижер-маэстрона Аристарх Гаврилович Орлов-Шусӑма чӗнсе илме ыйтатӑп, – терӗ Мария Васильевна.

Канашлура ларакансенчен чылайӑшӗ тӳрех Орлов-Шусӑм Елчӗке килмессе те пултарассине каларӗ, Ястребова вара вӗсене туххӑмрах лӑпланма ыйтрӗ. «Эпӗ ҫак эрнере Шупашкара каятӑп та ҫитес уйӑх пуҫламӑшӗнче манӑн пархатарлӑ вӗрентекенӗм Аристарх Гаврилович Шупашкартан Елчӗке командировкӑна килес ыйтӑва пӗтӗмпех усӑмлӑн татса паратӑп», – терӗ Елчӗк ял канашӗн ӗҫтӑвкомӗн ҫӗнӗ ертӳҫи яваплӑха хӑй ҫине илсе.

Пурӑна киле эпӗ республикӑри дирижер-маэстропа М.В.Ястребова характерӗнче пӗр пеклӗх асӑрхама пуҫларӑм. Чи пӗррремӗшӗ – иккӗшӗ те вӗсем тӑван халӑх пуласлӑхӗшӗн, чӑваш наци культурипе искусствине малалла аталантарассишӗн хӑйсем мӗн тума палӑртнине яланах вӗҫне ҫити чыслӑн пурнӑҫлатчӗҫ. Чӑн-чӑн патриотсемччӗ, чӑваш халӑхӑн вышкайсӑр пархатар ҫыннисемччӗ Орловпа Ястребова – ӑмӑрткайӑкпа кайкӑр.

Ҫур ӗмӗре яхӑн каялла Елчӗкри «Урожай» стадионӑн ячӗ кӑначчӗ ӗнтӗ. 1969 ҫулта вара вӑл палӑрмаллах ҫӗнелсе улшӑнчӗ. Ун йӗри-тавра илемлӗ карта тытрӗҫ, темиҫе ҫӗр ҫын вырнаҫмалӑх хулӑн хӑмаран саксем туса хучӗҫ, 200 артист вырнаҫмалӑх илемлӗ ятарлӑ арена ҫӗклерӗҫ. Ҫавӑн пек хӑйне евӗрлӗ усӑ культура сооруженийӗ ӗлӗкрех хуласенче тата хӑш-пӗр поселоксенче кӑна пулнӑ.

Ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче палӑртнӑ вӑхӑтра Акатуй-69 пуҫланчӗ. Унӑн тӗп илемӗ, паллах, М.В.Ястребова ӗмӗтленнӗ пекех, сцена ҫинче А.Г. Орлов-Шусӑм маэстро ертсе пынӑ мӑнаҫлӑ пӗрлештернӗ хор концерчӗ пулса тӑчӗ. Унта хӑш-пӗр мӑн хуҫалӑхран 20-25 ҫын кӑна хутшӑннӑ пулсан, Мария Васильевнӑн коллективӗнчи хӑй тӗллӗн вӗреннӗ 50 ытла артист юрланӑ. 1971 ҫулта Патреккел халӑх хорне унччен СССР Хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйӗсен мухтавлӑ В.И.Чапаев дивизийӗнче хӗсметре пулнӑ, Шупашкарти Федор Павлов ячӗллӗ музыка училищинче ятарлӑ пӗлӳ илнӗ Геннадий Борисов ертсе пыма пуҫларӗ. Чыс та мухтав М.В.Ястребован пархатарлӑ та пултаруллӑ вӗренекенне – РСФСР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченне, республикӑри тата ҫӗр-шыври тӗрлӗ фестивальсемпе смотр-конкурссен лауреатне Г.А. Борисова. Вӑл Патреккел чапне Атӑл тӑрӑхӗнчен пуҫласа Мускав таран ҫӗклерӗ. Паян Геннадий Арсентьевич ҫуркунне варринче Орлов-Шусӑм ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине тата хӑйӗн 65 ҫулхи юбилейне Пӑла тӑрӑхӗнче паллӑ тума хатӗрленет.

Ҫапла, Аристарх Гавриловичӑн ҫавракa юбилейне халалланӑ мероприятисем республикӑри тӗп вулавӑшра чаплӑ лару-тӑрура пуҫланчӗҫ. «Мерчен» музыка тӗпелӗн кӑҫалхи пирвайхи уявӗнче А.Г.Орлов-Шусӑм маэстро ҫинчен ӑна лайӑх пӗлнӗ Шупашкарти «Уяв» халӑх ансамблӗн илемлӗх ертӳҫи, Раҫҫей Федерацийӗн культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Зинаида Козлова, Чӑваш Республикин искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗсем Светлана Макаровӑпа Светлана Смирнова-Асамат, ЧР композиторсен ассоциацийӗн ертӳҫи Николай Зимин, Н.В.Никольский ячӗллӗ педагогика колледжӗн директорӗ, Елчӗк районӗн хисеплӗ гражданинӗ Валерий Сапожников тата ыттисем аса илчӗҫ.

Ҫав кунхине музыка тӗпелӗн концертӗнче Аристарх Гаврилович тӗрлӗ ҫулсенче ҫырнӑ ҫепӗҫ юрӑсемпе романссене Чӑваш патшалӑх академи симфони капеллин солисчӗсем шӑрантарчӗҫ. Василий Эктел поэт сӑввисемпе хайланӑ «Вун икӗ уйӑх» музыка циклӗпе Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн профессорӗ Татьяна Давыдова тата ЧР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Владимир Егоров паллаштарчӗҫ.

**Петр СИДОРОВ.**